Некрасов Н.А. Выçă юрă; Сыпăк : [сăвăсем] / Н.А. Некрасов; [вырăсларан К.В. Иванов куçарнă] // Некрасов Н.А. Сăвăсемпе поэмăсем / Н.А. Некрасов. – Шупашкар, 1947. – С. 60. .

## ВЫÇĂ ЮРĂ

(„Кама лайăх пурăнма Русь çĕрĕнче" поэмăран)

Хресчен тăрать—
Тайкаланать.
Хресчен пырать
Сывлаймасть те.

Çăкăр хытти.
Пĕрсе янă,
Хуйхи-суйхи
Халран янă.

Хура пичĕ
Кĕленче пек,—
Усĕр çын та
Ун пек пулмĕ.

Пырать, хашкать,
Хăй сывăрать,
Кĕçке çитрĕ
Ыраш патне.

Тунката пек
Тăчĕ те вăл
Юрлать сассăр
Хăй юрине:

„Çитĕн, çитĕн,
Эй, ырашăм,
Эпĕ санăн
Панкрат хуçу!"...

## СЫПĂК

(„Кама лайăх пурăнма Русь çĕрĕнче" поэмăран)

Хресчен çынни, хĕрсессĕн,
Ĕне пекех ĕнерсĕр:
Пуçне кирлĕ-кирлĕ мар
Пĕрер шухăш кĕрсессĕн,
Савăл лартса çапса та
Тукмакпа та тухас çук.